# П. Хусанкай – чăваш поэзийĕн çутă çăлтăрĕ.

«Эп пĕртак чăваш ятне çĕклесшĕн.
Ман юман  пулса кашламалла.
Хунавран эп тивĕç писĕхмешкĕн.
Малалла-ха пурнăç, малалла».

Петĕр Хусанкай – чăваш халăхĕн хальхи паллă поэчĕсенчен пĕри, нумай-нумай сăвă- юрăсен, поэмăсен, статьясен авторĕ. Унăн произведенийĕсене чăваш ĕç çыннисем лайăх пĕлеççĕ, юратса вулаççĕ, юррисене уявсенче, ĕçкĕ-çикĕсенче юрлаççĕ.

Хĕрĕх çула яхăн поэзи ĕçĕнче. Хĕрĕх ытла уйрăм кăларăм. Петĕр Хусанкай сăввисене çирĕм чĕлхене куçарнă, çав шутра: акăлчанла, пăлхарла, венгрла, французла, чехла. 1950 çулта Пётр Петрович Хусанкая Чăваш Республикин правительстви Чăваш халăх поэчĕ хисеплĕ ят парса чысланă.

Пирĕнтен кам пĕлмест пулĕ паян Петĕр Хусанкая, кам илтмен пулĕ унăн ятне. 2022 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче вăл çуралнăранпа 115 çул çитрĕ. Вăл поэт кăна мар. Çав вăхăтрах тăлмачă та, чĕлхеçĕ те, публицист та, историк та, этнограф та, критик та, лирик та пулнă. Унăн хайлавĕсем 57 чĕлхепе янăраççĕ, унччехи Совет Союзĕнчи 53 çыравçăн, чикĕ леш енчи 89 авторăн 500 ытла произведенине чăвашла е вырăсла куçарнă.

Пётр Петрович чăвашпа тĕнче литературисен туслăхне аталантарас тĕлĕшпе чăннипех те паттăр ĕç турĕ. Уйрăмах вăл тăванла пăлхар литературине Чăвашра, чăваш литературине Пăлхарта лайăх пĕлсе тăччăр тесе ырми-канми ĕçлерĕ. Халăх поэчĕ çавăн пекех Украина, Кавказ, Белоросси, Балтика, Атăлпа Урал тăрăхĕнчи туслă халăхсен хушшинчи асамат кĕперне хыврĕ, çав çыхăнусем паян кун та аталанса пыраççĕ.

Петĕр Хусанкай – чăваш халăхĕн мухтавлă та сумлă ывăлĕсенчен пĕри. Вăл пĕтĕм пурнăçне тăван халăхне халалланă. Унăн вилĕмсĕр «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăвви – чăваш халăхĕн пуласлăхĕшĕн кĕрешекенсен хăватлă манифесчĕ.

Савельева Екатерина, 10 класс